16 мĕш çул тухать

# КАПКĂН

№ 12 ИЮНЬ, 1940 çул

*„Чăваш Коммунĕ“ çумĕнче тухать*




АЧИ (*Крылов баснике вулать*): „Пĕр чӳречинчен сиктерсен, кĕрĕп эпĕ тепринчен...“
АШШĔ (*прогульщик пулнăскер*): Халь сиктермеççĕ, хăваламаççĕ çав. Вăл учреждениех ирĕксĕр ĕçлеттермелле тăваççĕ.

# Хӗрӳ кунсем

Иван Сергеевич, сухална хыртарма вӑхӑт ҫитнӗ. Ху ҫине пӑх-ха: сӑн-питна пӗтӗмпех ҫӑм хупласа ларнӑ,—тет колхоз парикмахерши Клава, кашни курмассеренех ӑна.

„Искра“ колхоз председателӗ пулса ӗҫлекен Иван Сергеевич, сухал тапса тухнӑ янаххине сӑптӑркаласа, Клавӑна хирӗҫ ҫапла калать:

— Тӗрӗс калатӑн, хӗрӗм, тӗрӗс. Чӑнах ҫӑмланса кайрӑм. Хыранмаллах пулать. Хырӑнӑп.

Анчах хырӑнма нимпе те вӑхӑт тупаймасть. Председателе Клава парикмахерсен пуканӗ ҫине икӗ хутчен лартса пӑхнӑ. Пӗринче Иван Сергеевичӑн питне супӑнь кӑпӑкӗ сӗрсе тухма та ӗлкӗрнӗччӗ. Тепӗр пӳлӗмрен бритва илсе киличчен председатель тухса шӑвӑннӑ. Вӑл района горючи илме каякан шофера ӑҫта-ӑҫта кӗрсе, мӗн-мӗн тумаллине ӑнлантарса яма чупнӑ иккен.

Кӗҫех ӑна чӗрӗ утӑ хуна урапа ҫине ларса иллӗкмӗш бригадӑна кайнине курӑҫҫӗ. Бригадӑра комбайн ӗҫлейми пулнӑ тенӗ хыпара илтнӗ иккен председатель. Ҫавӑнта чуптарнӑ вӑл лашине. Унтан, иллӗкмӗш бригадӑран тавӑрӑннӑ май, иккӗмӗш стана кӗрсе курнӑ.

Кантӑрлахи апат хыҫҫӑн колхозниксем каннӑ вӑхӑтра Тимофеев культурник вӗсене хаҫат вуласа панине курсан, председатель:

— Паянхи хаҫатра юлашки хыпарсем пит интереснӑ! Вуласа тухрӑр-и?—терӗ.

— Вуларӑмӑр,—ответлерӗ Тимофеевӗ, ун ҫине ӑшшӑн пӑхса.—Ма хырӑнмастӑн эсӗ, председатель юлташ? Сухалланса кайнӑ.

— Хырӑнмалла та-ха,—тет председатель айӑпа кӗнӗ сасӑпа.—Хырӑнмаллаччӗ. Иллӗкмӗш бригадара комбайн ӗҫлейми пулнӑ. Унта васкарӑм. Сирӗн мӗнле ӗҫсем? МТС директорӗ патне кайма васкатӑп-ха. Комбайн пирки калаҫмалла, вӑрҫса килес.

Кӗҫех председатель ҫӑмӑл урапа ҫине хӑпарса ларать. Ҫара уранах ларса тухнӑ кучер лашине: эй, ну! терӗ те лаши чуптара пачӗ тусанлӑ ҫулпала.

МТС-ран вӑл, директорпа тата механикпа пӗрле, директорӑн машини ҫине ларса бригадӑна васкарӗ.

Председателӗн хӗвелпе пиҫсе хуралсах кайнӑ, хӗрлӗ сухалпа витӗннӗ пичӗ ҫине пӑхкаласа пынӑ хыҫҫӑн, директор ыйтать.

— Сирӗн „Искра“ колхозра парикмахерски ҫук-им?

— Пур-ҫке!—тет Иван Сергеевич.—Манӑн обязательно хырӑнмалла. Анчах хырӑнмашкӑн ятарласа вӑхӑт уйӑрса илмелле.

Вӑхӑчӗ уйӑрлаймасть.

Уйран тулӑпа урпа пуҫтарса кӗреҫҫӗ, сиен кӳрекен хурт-кӑпшанкӑсене хирӗҫ хаярран кӗрешеҫҫӗ, выльӑх апачӗ хатӗрлеҫҫӗ...

Ҫанӑсӑр майкӑпа шупкаланса ларнӑ брюки тата ҫӑмӑл сандали тӑхӑнса тухнӑ, пӑхмалла мар ҫӑмламасланса кайнӑ Иван Сергеевич учительницӑна та, завхоза та, комсорга та, культурнике те, счетовода та, Клавӑна та:

— Ай, тырӑ аван кӑҫал! Мӗн ман ҫине пӑхатӑр? Пит селӗм тырӑ, первый сорт!—тет.

— Санӑн тӗкӗр витӗр ху мӗнлине курасчӗ, Иван Сергеевич,—тесҫӗ ӑна.

— Ҫӑмланса ларни ҫинчен-и эсир? Ҫапла, ҫапла! Обязательно. Тырпулсене пуҫтарса кӗртсен кунсерен икшер хырӑнма тытӑнӑп, ҫӳҫе подпольку кастарӑп. Пирӗн Клава ҫӳҫ касма ӑста. Пур прическӑсене те вӗренсе ҫитнӗ: бобрик, ежик, бокс, полубокс.

Правлени чӳречи умӗнче ҫав вӑхӑтра темӗскер кӗрлени илтӗнсе каять.

Районра тухакан „Колхоз ҫулӗ“ хаҫат редакцин фотографӗ, мотоцикл ҫине ларнӑскер, правлени крыльци умне кӗрлеттерсе пычӗ. Хӑйпе пӗрле сӑн ӳкермелли камерӑпа виҫ уралл ӑ япалине илсе килнӗ.

— Ну-с, юлташсем, хатӗрленсе тӑрӑр пурте,—терӗ вӑл вӑхӑт иртт ерме юратманскер, васкаса калаҫакансер, анчах темӗскерле пулса карӗ председателе курсан:—Мӗнле ӳкерейӗр-ха председателе сирӗнне? Чи кирлӗ фигура вӗт вӑл. Робинзон Крузо. Хырса ярӑр, тархасшӑн, ӑна, гражданесем!

Мӗн тейӗр эсир? Иван Сергеевича тытса парикмахер пуканӗ ҫине черетсӗрех лартрӗҫ. Хӗпӗртесе кайнӑ Клава унӑн мӑйӗ айне салфетка хурса ҫыхать, супӑнь кӑпӑкӗ тӑвать. Иван Сергеевич пуҫне сиклеме тытӑнать.

— Ҫук, Клавочка, халӗ ӗҫ тухас ҫук. Тепӗр чух килӗп. Халӗ манӑн васкасах бригада каймалла—тӗреслемелле: лупасӗсем мӗнле вӗсен? Пӗлӗт тухать, ав куратӑн—крыша хыҫӗнчен. Ну, камра черет? Килсе лар! Эп васкатӑп.

— Иван Сергеевич!—кӑшкӑрса юлаҫҫӗ кусем.—Фотограф сан ӳкерсе каясшӑн.

Вӑл аллипе сулчӗ кӑна.

— Юрать. Кайран. Тепӗр чух.

Тепӗр минутран ҫӑмӑл урапипе колхозӑн аслӑ урамӗ тӑрӑх анаталла вӗҫтернине кӑна курса юлчӗҫ. Фотограф вара Иван Сергеевичӑн сӑнне ӳкермесӗрех кайрӗ.

Темиҫе эрне иртсен „Искра“ колхозра пурте район хаҫатӗнче чи малти страницӑра пичетленсе тухнӑ председателӗн портретне пӑхса тӗлӗнеҫҫӗ.

— Мӗнле ку? „Искра“ колхоз председателӗн янаххи яп-яка, пӗр пӗрчӗ те сухал ҫук, ялкӑшса ҫеҫ ларать, уяври пек, шурӑ воротничекпа, галстукпа.

— Ку сӑнӳкерчӗк ҫине пӑхсан, эсӗ, Иван Сергеевич, пит ҫамрӑкӑн курӑнатӑн. Пӗр ҫирӗм ҫула яхӑн ҫамрӑкланнӑ пек ларатӑн. Хӑҫан ӳкерттернӗ ӑна? Ӑна ӳкерттернӗ чух эсӗ питӗ хитре каччӑ пулнӑ иккен,—тесе кӑшкӑрса янӑ учительница, хӑй тата теменшӗн ҫавӑнтах хӗрелсе кайнӑ.

— Калаҫатӑн ҫав эсӗ те, Олимпиада Васильевна,—тенӗ хирӗҫ Иван Сергеевич, тем пирки хӑй те хӗрелсе.—„Ҫирӗм ҫула яхӑн ҫамрӑкланнӑ пек“ тетӗн. Эпӗ пӗтӗмпе те ҫирӗмтӑхӑр ҫулта кӑна. Ытти вара тӗрӗс: вӑл фотокарточкӑна ӳкерттернӗренпе чылай вӑхӑт иртрӗ. Эпӗ хӑҫан ӳкерттернӗччӗ-ха ӑна? Ҫураки хыҫҫӑн. Да, да... ун чух ҫум ҫумлама тухманччӗ. Ҫураки пӗтерсенех ӳкерттернӗ. Ҫаплах.

**Л. Митницкий.**

(„Крокодилтан“).

# КĔСКЕ КАЛАВСЕМ

## Куçса ларакан

Вăрнар вокзалĕнче Уртеменкасси колхозникĕ Канаша каякан поезд килессе кĕтсе ларнă. Унăн паранкă мишукĕсем темиçе те пулнă Ларсан-ларсан ун умне икĕ уборщик пырса тăнă та:

— Çав кĕтесе куçса ларăр-ха. Эпир урай шăлса тухасшăн,—тенĕ.

Колхозник хирĕçсе тăман, япаласене пуçтарса, каланă вырăна куçса ларнă. Нумай та иртмен, ун умне пĕр уборщик каллех пырса тăнă.

— Юлташ, çав стена патнерех куçса лармăнши? Урай шăлма чăрмантаратăн пире,—тенĕ.

Колхозник итленĕ. Куçса ларнă.

— Çав кĕтесе куçса лар-ха,—тенĕ ăна кăштах иртсен татах уборщик.

Колхозник шăртланса кайнă.

— Канлĕ ларма памастăр,—тенĕ вăл.—Мана пĕр май вырăнтан вырăна куçара-куçара лартма... налог агентчĕ мар эпĕ.

— Ма апла калан?—ыйтнă уборщикĕ.

— Пирĕн Уртеменкассинче налог агентне пиллĕк хут улăштарчĕç. Пĕрне куçарса тепĕрне лартаççĕ. Пĕр май куçара-куçара лартни килĕшӳсĕр,—тенĕ.

## Вĕсем пĕлеççĕ

Тимирязев ячĕпе хисепленсе тăракан ялхуçалăх академинчен вĕренсе тухнă Петров колхоза таврăннă.

— Халĕ çеç пĕчĕкçĕччĕ, урамра чупса çӳретчĕ, ялти шкула вĕренме чупатчĕ. Ялхуçалăхĕн пысăк специалисчĕ пулса таврăнчĕ халь,—тесе калаçнă колхоз правленинчисем.

— Пирĕн ферма выльăхĕсене пăхма вĕренсе юласчĕ. Ĕне фермине пыма чĕнер. Каласа патăр пире мĕнле пăхсан ĕнесене сĕт хуштарма пулать. Ав выставкăра пĕр ĕнерен талăкра 69 литр çурă сĕт суса илеççĕ, тет,—калаçнă дояркăсем.

— Пирĕн ферма сыснисене пăхма вĕренсе юласчĕ. Ав Мускаври выставкăра пĕр ăратлă сысна 26 пăт туртать, тет. Вот сысна тăк сысна!—калаçнă свинарсем.

Петров ĕне фермине курма пычĕ. Фермăна кĕрсенех чарăнса тăчĕ. Пĕр хура ĕнене купарчинчен çапса илчĕ—тусан тухрĕ. Тепĕр ĕнене шыв парса пăхрĕ—ĕни шыва ĕçсе ячĕ, аллинчи туйипе ĕнесем выртнă çĕрте хытса выртакан тислĕке тĕртсе илчĕ те, ĕнесене мĕнле пăхмалли çинчен питĕ кĕскен каласа пама тытăнчĕ:

— Ĕнесене апат лайăх памалла, вĕсене вăхăтра çитерсе вăхăтра шăвармалла, таса тытмалла,—тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне.

Çакна илтнĕ хыççăн Петровăн авторитечĕ пĕтсе ларчĕ. Дояркăсем çапла пăшăлтатса илчĕç:

— Ун çинчен кам пĕлмест. Халиччен илтмен çĕнĕ япала çинчен каласа патăм, терĕ, пулĕ. Ăна эсĕ каламасан та пĕлетпĕр,—тенĕ

## Кам чăтăмлă

Шупашкарти Колхозник çуртĕнче пĕре çĕр выртма юлнă çынсем çутă тĕнчере кам чăтăмлăраххи çинчен тавлашу пуçарса янă.

— Ман шутпа тĕнчере лаша пек чăтăмли çук. Сăмахран, пирĕн Вăтакасри колхозра лашасене пит япăх пăхаççĕ пулин те, шутсăр нумай ĕçлетереççĕ.

— Лаша мар, хут чăтăмлă. Вăл тем çырнине те тӳсет...

— Ан сӳпĕлтетĕр. Чăнахах пĕлместĕр иккен тĕнчере кам чăтăмлине. Хут чăтăмĕ мĕн вăл! Пĕлнĕ пек калаçатăр тата хăвăр...

— Пĕлетĕн пулсан каласа пар, шăртланса ан лар,—кĕрлесе илнĕ темиçе сас пĕр харăс.

— Пирĕн Ишлей райисполкомĕн машинистки чăтăмлă. Ишлей районĕнчи çулйĕр строительстви ыйтăвне районри Совет исполкомĕнче 7 хут сӳтсе-явнă, унсăр пуçне 3 хутчен канашлу ирттернĕ. Анчах вĕсене пурнăçа кĕртмен, çулйĕр строительстви питĕ начар пырать. Пичетлесе панă решенисем пурнăçа кĕрсе пыманнине пĕлсех çавăн пек решенисем пичетлесе ларма чăтăмлăх нумай кирлĕ ĕнтĕ.

— Курман-им ун пеккисене! Каласа хучĕ!—терĕ тепĕр колхозник.—Ман ăспа, Чăвашпотребсоюз председателĕ Ларионов юлташ пек чăтăмли урăх çук. Унăн иртнĕ çулта 156 ялпоран 8 ялпо çеç растрата тумасăр ĕçленĕ. Вăл растратăсене тӳссе иртерме мĕн тери пысăк чăтăмлăх кирлĕ.

— Ай, калаçан çав! Чăвашторг директорĕ Шишкин юлташăн та чăтăмĕ Ларионов чăтăмĕнчен кая мар. Унăн Çĕмĕрлепе Улатăрта çеç растратăсемсĕр суту-илӳ тăваççĕ темелле...

— Кала эппин, сан шухăшупа кам чăтăмлăрах?

— Ман шухăшпа-и? Советский районри Хучаш çыннисем питĕ чăтăмлă. Вĕсем самообложени укçине апрельпе май уйăхĕсенче пĕр пус та тӳлемесĕр пĕтĕм Чăваш республики умĕнче намăса тухрĕç. Çав намăса тӳссе иртерме чăтăмлăх нумай кирли такама та паллă.

— Вăл намăс ял Совет исполкомне тивет. Ыйтакан пулман, тӳлеме маннă. Эпир тӳлеттĕмĕр,—терĕ Хучаш çынни.—Пире ан айăплăр. Шухăшлатăп-шухăшлатăп та, чĕлхе пек чăтăмли çук. Вăл тем калаçтарнине те чăтать,—терĕ те халап çапса ларакансем шăпах пулчĕç.

**Ив. М.**

## Ронора

Советскийпе Октябрьский районсенче шкулсем тăвас ĕç питте вăраххăн пулса пырать.

— Шкулсем тăвас тĕлĕшпе питĕ вăраххăн ĕçлетĕр. Сехет пек ĕçлес пулать.

— Эсĕ каламасăрах сехет пек ĕçлетпĕр. Сехечĕ пирĕн 2 сехет кая юлнă.

# Шит хăлаçпа танлашмасть

„Шурăмпуç“ колхозран „Правда“ колхоза социализмла ăмăрту договорĕ мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслеме хăнасем килнĕ. Вĕсене Еккĕм мучи скотник выльăхсене мĕнле пăхса усрани çинчен каласа кăтартнă. Хăнасем фермăри тасалăха, тирпейлĕхе пурте мухтанă. Уйрăмăнах вĕсем çултаlăкне виçшер пин литр ытла сĕт паракан ĕнесем çине тата кĕтесри читлĕхе сăнчăрпа кăкарса хунă „Титан“ ятлă вăкăр çине юратса пăхнă. Пĕр хăни унăн тăрăшшĕне шитпе виçме те шутланă, анчах „Титанĕ“ чавса хулăмĕш майракипе хăмсарса „бум, бум, бум“ тесе мĕкĕрме пуçласан, шитпе виçме мар, патне пыма та хăранă.

— Пирĕн кун пек вăкăрсем виççĕ те пур, пĕрне сутма шутлатпăр. Сирĕн ферма пĕчиккĕ тата как-никак хамăрпа ăмăртатăр, сире кĕтмелле те пама пулать,—тенĕ „Правда“ колхоз председателĕ Березов.

— Хамăрăн хамăра çитет-ха, ӳлĕмрен те ĕлкĕрĕпĕр,—ответленĕ „Шурăмпуç“ колхоз председателĕ Соломин, юлхаврах сасăпа.

Таварлă сысна ферминче хăнасем хăлаç тăршшĕ чăсăлса выртакан сысна амисем çине, пулă пек выляса çӳрекен пит таса çăварсем çине пăхса савăннă.

— Эх, закускăсем!—тесе янă пĕр хăни, чăтаймасăр.

— Кăмăла каять-им?—ыйтнă Березов.

— Пулсан пăсас çук,—тенĕ хăна, хăйĕн умĕнче чĕрĕ сыснасем мар, шаритленĕ сысна ашĕ хунă турилке ларнă пек пăхса.

— Çитес пасара пĕр вунă мăшăр сутма илсе тухас тетпĕр, палламан çынсене париччен эсирех туянăр. Хамăр çынсене кĕтмелле пама та пулать,—тенĕ Березов.

— Хамăрăн та пулĕç-ха, — ответленĕ каллех „Шурăмпуç“ колхоз председателĕ Соломин.

Кун хыççăн хăнасене сурăх тата чăх фермисене ертсе кайнă.

— Сирĕн кун пек фермăсем çук-ха,—тенĕ Еккĕм мучи.—Сурăхпа чăх та колхоза пысăк тупăш параççĕ. Эсир те тума шутлатăр пулсан пулăшăпăр.

— Ытла хыпаланмалли çук-ха, ĕлкĕрĕпĕр,—тенĕ шурăмпуçсем.

Тепĕр кунне, тĕрĕслӳ итогĕсене тунă тĕле, „Правда“ колхоза райçĕрĕç пайĕн представителĕ çитнĕ.

— Ну, тĕплĕн тĕрĕслерĕр-и?—мăнаçлăн ыйтнă вăл.

— Как никак пурне те курчĕç, кăмăлĕсене кайни çинчен хăйсем калĕç,—тенĕ Еккĕм мучи.

— Так, эпир сирĕн арбитр пулатпăр, кам мала тухни çинчен тĕрĕссипе каласа парăпăр.

— Каламасăр та паллă, шурăмпуçсен пире çитме инçе-ха. Вĕсен мĕн пур ферминчи ĕнисем пирĕн „Розăна“ тăмаççĕ,—тенĕ Еккĕм мучи, куçне хĕссе.

— Кун çинчен тĕрĕслӳ итогĕсем кăтартса парĕç,—хыттăн хушса хунă арбитр.— Давай договор пункчĕсене пăхса тухас. Договорсене кăларăр-ха. Так, юрать. Пĕрремĕш пункт – ĕçкунĕ пуçне 6 килограмран кая мар тĕштырă валеçмелле тумалла. „Правда“ колхоз, сирĕн миçешер килограмм валеçнĕ?

— Тăваттă çурă...

— А „Шурăмпуç“?

— Улттă çурă!—харăссăн кăшкăрса янă шурăмпуçсем.

— Так, çырăр,—тенĕ арбитр, çирĕп сасăпа,— „Правда“ хăйĕн обязательствине пурнăçлайман. Илтетĕн-и, Березов юлташ, улттă мар, тăваттă çурă.

— А эсир пирĕн фермăсене...—сăмах хушма пикеннĕ Березов.

— Цифр хăйĕншĕн хăй калать, —тенĕ арбитр ăна пӳлсе.—Цифр вăл резина мар, ăна чăсма та, пĕрме те çук. Та-ак, малалла кайăпăр. Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçланине тĕрĕслĕпĕр. Тĕштырăсем енĕпе.

— Пĕтĕмпех парса татнă!—харăссăн ответленĕ шурăмпуçсем.

— Татрăр ĕнтĕ, татрăр,—тенĕ „Правда“ колхозри стахановец Дубин,—эпир юлашки лавпа кайнă чухне сирĕн малтанхи лавăрсем пычĕç.

— Ăна халĕ шутламăпăр,—тенĕ шурăмпуçсем,—эсир ыттисем пирки каласа пăхăр.

— Аш-какай?—хыттăн ыйтнă арбитр.

— Эпир такçанах парса татнă!—кĕрлесе кăшкăрнă хăнасем

— Апла ĕнтĕ, апла, анчах эсир панă аш-какая эпĕ, хырăм выçнă тĕл пулсан, пĕччен пĕрре ларса çисе яма пултарăп,—тенĕ Еккĕм мучи, çилленме пуçланăскер.

— Эпир кунта мĕн чухлĕ панине мар, плана тултарнине пăхатпăр,—тенĕ арбитр,—„Правда“ колхоз заданине пурнăçланă-и?

— Çур центнер таталайман,—тенĕ Березов, тытăнкăрах сасăпа.

— Çырăр, „Правда“ колхоз иккĕмĕш пункта пурнăçлайман.

Итог туса пĕтерне хыççăн, „Правда“ колхоз кая юлнине палăртнă. Березов та, Еккĕм мучи те, Дубин та, ыттисем те кун пек мăшкăллă итога вуçех кĕтмен. „Шурăмпуç“ колхозăн 10—15 пуç ĕнеллĕ, 10—12 пуç сысналлă фермăсемсĕр пуçне нимех те çук, анчах мала тухать. Государствăна сĕт-çу, аш-какай, çăм, тир, çăмарта, пахча-çимĕç тата ытти продуктсене лавĕ-лавĕпе паракан „Правда“ колхоз кая юлнă мĕн.

— Эккей,—тенĕ Еккĕм мучи, ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса.

— Тĕрĕс мар ку,—тенĕ Березов—шите хăлаçпа танлаштараççĕ.

— Тăр кăнтăрла пире шăхăртса хăвараççĕ,—тенĕ мучи.—Çук, шăхăртаймăн, шăхăртас та çук.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата СССР Совнаркомĕ чăн тĕрĕслĕхе тупса пачĕç. Кăçал икĕ уйăх каярах парти райкомĕн представителĕ Березова, Еккĕм мучине, „Правда“ колхозри тата ытти паллă стахановецсене „Шурăмпуç“ колхоза илсе кайрĕ.

— Эпĕ Центральный Комитетăн мартри пленумĕ „Ялхуçалăх продуктисен заготовкисемпе закупкисене иртерес политикăри улшăнусем çинчен“ йышăннă решенине ăнлантарса парăп. Эсĕ Еккĕм мучи хăвăрăн чаплă фермăсене мĕнле туни çинчен доклад туса пар,—тет вăл.

Райком представителӗн доклачӗ мучине тата хытӑ хавхалантарса ячӗ пулас.

— Эх, эсир те ҫав, хӑвӑра „Шурӑмпуҫ“ тесе ят панӑ, анчах кӑвайтӑ ҫутине те тӑмастӑр. Пиртен икӗ хут нумай ҫӗр акса пурӑнатӑр, анчах аш-какай государствӑна пиртен виҫӗ хут сахал, сӗте тӑватӑ хут сахал парса тӑнӑ, пӗрре яшка пӗҫермелӗх те пахча-ҫимӗҫ паман. А иртнӗ ҫулта пирӗн пата пырса тӗрӗслесен, „Шурӑмпуҫ“ малта пырать тесе кӑшкӑртӑр мар-и?—тет вӑрттӑн кулса.

Мӗн тӑвас тен, цифр резина мар, ӑна тӑсма та, пӗрме те ҫук, шурӑмпуҫсене ку сӑмаха йышӑнма тивет.

— Ничево,—тет мучи,—эсир такамсем мар-ха, хамӑр ҫынсемех. Эпир сире фермӑсенчи выльӑхсен шутне ӳстерме, сурӑх тата чӑх-чӗп ферми тума пулӑшӑпӑр. Начартарах ҫынсем те ӗнтӗ эсир, анчах хамӑрпа ӑмӑртатӑр-ҫке. Хамӑрпа танлаштарас пулать.

Вӑл кунхине „Правда“ колхозӑн представителӗсем „Шурӑмпуҫ“ колхозра чи хисеплӗ хӑнасем пулнӑ.

**Никита Волков.**

## Пушӑ пӳлӗм

Тулли пӳлӗмпеле юнашар
Пушӑ пӳлӗм пур.
Чим-ха ҫак пӳлӗм пирки калаҫар,
Курас тесен атя, кӗрсе кур.
Кӗретпӗр. Эпир кӗрсе кайсанах
Пушӑ пӳлӗм алӑк сассипе
Хӑлхасем хупланса лармаллах
Янтраса карӗ пӗтӗмпе.
Урай ҫине пуссассӑн урапа
Сасси таҫтах каять янтраса,
Калаҫма тӑрсан та янтравпа
Сӑмаха илтмелле мар уйӑрса.
— Те урай янтрать, те кӗтес,
Те ку шӑв-шав анать маччаран.
Ҫак пӳлӗм ма пит янтравлӑ?— тен пуль эс.
Итле — пушӑран янтрать вӑл, пушӑран!

* * *

Пуҫра пур ҫын нумай калаҫмасть.
Ӑна унсӑрӑнах аван кураҫҫӗ.
„Пушшисем ҫеҫ“ вӗҫӗмрен
Пушӑ пӳлӗм пек янтраҫҫӗ.

**Н. ЕВДОКИМОВ.**

## Кахал сывлӑхӗ.

Н. Сверчков ӳкерчӗкӗ.



— **Сывлӑху мӗнле?**
— **Начар.**
— **Ма апла?**
— **Бюлетен срокӗ тухрӗ. Ыран ӗҫе тухмалла.**

# ТАНТĂШ ЕХВИН

— Эсир те пĕлетĕр пулмалла-ха манăн Ехвин тантăшăма,—терĕ Хветут хăйĕн калавне пуçласа,—çырма хăви пек яштака пӳ-силлĕ, çырла çеçки пек хитре сăн-пуçлă çамрăк çын вăл. Анчах кутăнлăхĕ ытла пысăк вара ун. Пĕр лава та вырнаçтараяс çук. Колхозра ĕçлемест, мур. Çапла ăна пĕррехинче бригадир ӳкĕтле-ӳкĕтле сӳрене илсе тухнă. Сӳреме тыттăннă Ехвин, анчах хăй вĕçĕмсĕр сӳре çине пăхса пынă, лаши мĕнле пыни уншăн кирлĕ мар пек туйăннă пулас.

— Эй, Ехвин тусăм,—тенĕ вара ăна бригадир,— лашуна та пăхкала эсĕ, сӳрӳ тармĕ вăл, лаши лайăх пырсан, вăл та тӳрех пырĕ.

— А юрĕ,—тенĕ Ехвин, хăй çавăнтах куçĕсене сӳре çинчен лаша çине куçарнă.

Анчах нумай та вăхăт иртмен, бригадир каллех Ехвине кăшкăрнă:

— Сӳрӳ татăлса юлчĕ, ма асăрхамастăн!

— Мана сӳре çине пăхма хушман вĕт эсĕ,—ответленĕ Эхвин,—лаша çине пăхмалла манăн.

— Иккĕшне те пăхас пулать.

— Иккĕшне те пăхма ман малта та хыçалта та куçсем çук вĕт.

Мĕн калас тен ăна—кутăна, ĕçе тухас пулсан та, вăл кашни расрах çапла тарăхтарнă. Ĕçе те сахал чĕннĕ вара ăна. Çапах та вăл манăн тантăш, эпĕ ун патне пĕрмаях çӳретĕп. Укĕтлетĕп. Ара, хамăн тантăшăм вĕт вăл, хисеплĕ çын тăвас килет ман ăна. Анчах, хам урăх çĕре куçнипе, эпĕ ăна пĕр-икĕ çул та пулĕ курмасăр пурăнтăм. Акă халĕ киле таврăнсанах ун патне кайса калаçса ларма шут тытрăм эпĕ. Çавăн пекех кутăнла калаçать, хăямат. Хăй çапах та мана пысăк хăна турĕ.

— Ан тăкаклан маншăн эсĕ,—терĕм эпĕ ăна,— эпĕ калаçса ларма çеç килтĕм сан пата. (Ку колхозра ĕçлеменскерĕн пурнăçĕ туллиех мар пульха, тесе шутларăм эпĕ хам ăшăмра).

— Расхутланни нимех те çук кунта, сана хăналама хамăн арăм вĕрентрĕ мана, анчах хăй тухса кайнă-ха...

Эпĕ ăна хăйĕн сăмахне вĕçлеме памарăм, тĕлĕнсе хыттăн кăшкăрса ятăм:

— Эсĕ те... эсĕ авланнă-им?

Ман пуçра шухăшсем çиçĕмле выляса илчĕç: мĕнле ухмах хĕр килнĕ çак кахала? Илемне ытараймасăр-шим? Ак тамаша. Эхвин те ман шухăшсене сисрĕ пулас, ман çине пăхса çемçен кулса илчĕ те калаçма пуçларĕ.

— Авланмасăр. Эпĕ авланма тивĕç мар-им ара?.. Халь хăй килте çук та... анчах акă унăн юррине итлесе пăхма пултаран.

— Мĕскер сӳпĕлтетен эсĕ? Пăрах-ха çав эсĕ кутăнла калаçма. Мĕнле хăйсĕр пуçне ун юррине итлен?

— Мĕне кирлĕ хăй, акă итле...

Ман Ехвин сĕтел çине патефон пырса лартрĕ. Чăвашла пластинкăсем итлеме пуçларăмăр.

— Апла эсĕ артисткăна çаклатса илнĕ-им?—тата ытларах тĕлĕнсе ыйтрăм эпĕ,—пĕлетĕп, чăвашсен чаплă артисткăсем пур.

— Çапла, пур вĕсем, анчах ман арăм артистка мар.

— Кам тата?—тесшĕнччĕ эпĕ, анчах çав вăхăтрах ман куç умне стена çумĕнче ларакан çапçутă велосипед курăнса карĕ.

— Камăн велосипечĕ ку?—хыпаланса ыйтрăм эпĕ.

— Велосипечĕ хамăн, анчах ĕçĕ арăмăн.

— Аха, ăнлантăм ĕнтĕ халь,—терĕм эпĕ каллех хыпаланса,—пĕлетĕп, сан арăму машинăсем тăвакан предприятинче ĕçленĕскер пулнă... Епле майпа паллашрăр?

— Апла та мар,—тет мана Ехвин,—ман арăм унта ĕçлемен, колхозница вăл.

— Вон мĕнле иккен, тинех ăнлантăм,—терĕм эпĕ юлашкинчен,—эсĕ колхозри стахановкăна илнĕ. Епле килчĕ-ха вăл сана?

Манăн Ехвин кунта каллех кулса ячĕ, маншăн ним ăнланмалла мар калаçма пуçларĕ.

— А, эсĕ ман арăма стахановка тетĕн. Çук, апла мар çав, тĕп кутăн, ултавçă пулчĕ вăл ман арăм. Ĕненмесен, итле. Пĕлетĕн вĕт эсĕ, колхозник ята илтес тесен, 80 ĕçкунĕнчен кая мар тумалла Çак иртнĕ çулхи май уйăхĕнчен пуçласа манăн та ирĕксĕрех тӳрĕ кăмалпа ĕçлемелле пулчĕ. Сисетĕн-и, çак нормăна тултарма мана пысăк йывăрлăх пулнă. Çапах та ĕçлес пулчĕ. Шăп тата кĕтмен инкек сиксе тухрĕ: арăм чирлесе ӳкрĕ, аран çӳрекелет, çапах та хăй 80 ĕçкунне çитересшĕн.

— Ехвин,—тет,—юратнă Ехвинĕм, мĕнле-ха нормăна çитерĕн. Мана намăса ан хăвар, ытларах ĕçле-ха эсĕ, тет. Мĕн тăвас тен, хама, ĕçлеме вĕренменскере, йывăртарах килчĕ пулсан та, эпĕ унпа килĕшрĕм. Килĕшмесĕр ара, хам арăм вĕт. Çапах та ман арăм хамран та иртерех тăрса каять, хамран каçа юлса килет. Пĕрре те хампа пĕрле ĕçлемест. Бригадир яланах ăна расна ĕçе ярать. Куншăн бригадир çине çилленсе те пăхрăм. Унтан та, арăмран та мĕншĕн пĕрле ĕçлеттерменни çинчен ыйтса пĕлтĕм.

— Ара пĕлетĕн вĕт, мана йывăр ĕç тума юрамасть,—тет мана хирĕç арăм.

— Ытларах ĕçле ĕнтĕ эсĕ, Ехвин,—тет бригадирĕ,—арăму çине майлаштарса çырăпăр. Как калас, арăму йывăр çын, хамăр çыншăн тăрăшас пулать.

Хамшăн тăрăшнăшăн хытă тав турăм эпĕ ăна вара. Аван çын тесе вара ăна ĕçтеркелерĕм те. Ĕçнĕ хушăра ĕçкунне ӳстерсе лартма ыйтрăм та, анчах итлемерĕ. Вăл енчен питĕ хытă пулчĕ вăл. Çапла ĕçлесе çу каçрăмăр эпир. Ĕçсем пĕтнĕ хыççăн кĕтмен япала пулса тăчĕ: бригадир Иван пире арăмпа иксĕмĕре те хăнана чĕнчĕ. Малтанласа каймарăм эпĕ, анчах Иван мана ирĕксĕр илсе карĕ.

— Хăвăр патăрта ĕçнĕ-çке, халь пире черет,— тет.

— Ара, Иван, итле-ха эсĕ, эпĕ сана урăххишĕн ĕçтернĕ вĕт... Ху пĕлен мана.

— Çук эпĕ ун пеккисемшĕн ĕçсе çӳрекенни мар, ун пек тăваканни те мар эпĕ,—тет мана Иван.

— Мĕнле „апла тăваканни мар“? Улталарăн-им эсĕ апла мана?

— Улталарăм çав...

— Апла манăн ытлашши ĕçкунне те арăмăн ĕçкĕнеки çине куçарса çырмарăн-им?

— Куçарман.
— Ма?
— Ара мĕншĕн куçармалла, ун пек тума устав та хушмасть те, тата арăмун санăннинчен хăйин те нумай ытларах.

Эпĕ тĕлĕннипе çăвара карсах пăрахрăм. Тепĕр кунне колхозниксен аслă пуххинче тата ытларах тĕлĕнтĕм. Ман арăма стахановка ятне пани çинчен пĕлтерчĕç. Çĕлекен машинăпа премилерĕç. Çапла улталарĕ мана арăм,—тесе каласа пачĕ мана Ехвин.

Ултав мар, ăслă чеелĕх ку,—терĕм эпĕ ăна хирĕç.

Ехвин каллех кулса илчĕ ман.

— Маттур ман арăм, вăл мана патефон, велосипед, костюм илме пулăшрĕ. Ĕçсĕр ахалех ланккаса çӳриччен, ĕçлесен вăхăчĕ те хаваслăрах иртет, пуян та культурăллă пурнăç та пулать. Ĕçлес, халĕ сывлăх пур чухне,—тет Ехвин.

Ехвин калаçса пĕтерне çĕре арăмĕ те пырса кĕнĕ. Ытарма çук чиперскер вăл. Вăл та мана çакăн çинченех каласа пачĕ. Вăл Ехвине малтанах çын тăвас шутпа качча тухнă мĕн.

— Вăт юрату, ав мĕнле пысăк ĕç туса хума пултарать вăл,—терĕм вара эпĕ.

**М. Аркай.**

# ТАПРАНМАСĂР МАР

Ишлейри МТС работникĕсемпе пĕрле канмалли кунсенчен пĕринче эпир Ишлей райисполкомĕн гаражне кĕрсе куртăмăр. Экскурсантсем (МТС работникĕсем) грузовой автомашина скачĕсем ахаль, ним усăсăр выртнине курсан шутсăр тĕлĕнсе кайрĕç. Вĕсем музейри Рубенспа Тициан картинисене те хальхи пек пысăк интереспа пăхас çук пулĕ, мĕншĕн тесен...

— Чăнах скат-çке! Виçĕ скат! Пирĕн МТС-ăн тăватă автомашинăран пĕри аран çӳрекелет, ыттисем пурте скатсем çуккипе лараççĕ,—тесе кăшкăрсах ячĕç МТС тракторисчĕсем.

— МТС дирекцийĕ çак скатсене е укçалла е вăхăтлăха усă курма пама исполком председателĕнчен Херсоновран темиçе хут ыйтсан та паман,—терĕ пĕри. —Халĕ ыйтсан парĕ-ши?

—Ма памĕ? Вĕсен хăйсен грузовой машина çук вĕт.

— Çук, памастпăр,—терĕ исполком çынни.
— Ма памастăр?
— Хамăра кирлĕ.
— Мĕн тума?
— Запаслăх.
— Сирĕн вĕсем усăсăр, ним хускалмасăр выртаççĕ вĕт!
— Тапранмасăр мар та... Эпир вĕсене иртнĕ уйăхра çеç леш кĕтесрен ку кĕтесе куçарса хутăмăр. Тапратни пулать ĕнтĕ вăл? Тĕрĕс мар ан калаçăр,—тесе ăсатса ячĕç пире исполком çыннисем.

# УПЛЕР ЯЛĔСЕМ

(*Сĕнтĕрвăрри районĕ*)



**— Ну, ачасем! Экскурсине килни усăллă пулчĕ-и? Хамăр ялта курманнине куртăр-и?**
**— Хамăр ялта çуккине-и? Куртăмăр-çке!**
**— Мĕн куртăр?**
**— Пĕве шывне.**

# МӖСКӖН СТАРИК

Микулай пиччепе Савин юлташ сад пахчинче тӗл пулчӗҫ те хӑйӑр сапса якатнӑ сукмак тӑрӑх, шап-шурӑ ҫурӑлнӑ улмуҫҫисем хушшипе, тӗрлӗ-тӗрлӗ чечексемпе витӗннӗ ҫерем патнелле утса кайрӗҫ; вӗсем, тем ҫинчен питех те тимлӗн каласса, симӗс тӗм умне, канса ларма тунӑ тенкел ҫине пырса ларчӗҫ.

— Эпӗ сан патна, Николай Петрович, лешин ҫинчен, ирхи кайӑк ҫинчен, калама килтӗм. Ну вӑт, ыйтса тӗпченӗ хыҫҫӑн, акӑ мӗн курӑнчӗ: эсӗ шӑпах ҫав эпир ширанӑ кайӑка ҫаклатнӑ...

— Вӑт пулать этем, пӑхма хӑй—хӗтӗ-хӗтӗ старик, сухал ӑшне путнӑ хӑрӑк этем...—терӗ тӗлӗнсе Микулай пичче.

— Сухал ӑшне путнӑ, тетӗн... Анчах унӑн нимӗнле сухал та ҫук вӗт, пӑхма ҫеҫ мӑн сухаллӑ старик, чӑннипе илсен, вӑл пӗтӗмпе те вӑтӑр ҫулта ҫеҫ...

Ҫак сӑмахсене илтсен, Микулай пичче, ҫиллине шӑнарайманнипе, пӗрре шуралса кайрӗ, тепре хӗрелсе кайрӗ те:

— Ана, шуйттан кӗвентине, ма тытса ӗнселемерӗм пӗрре,—тесе сурчӗ.

Микулай пичче паян, ир ҫинче мӗн пулнисене тепӗр хут асаилчӗ.

Николай Петрович, колхоз садӗнче ӗҫлекен мичуринец, ҫак иртнӗ каҫхине те сад пахчинчех ҫӗр каҫнӑ. Вӑл хӑйӗн юлташӗсемпе пӗрле каҫпала, тӑм ӳкессине пӗлсе, улмуҫҫи чечекӗсене тӗтӗрнӗ, ҫӗрӗпех ӗҫленӗ.

Микулай пичче пӗр-ик сехет хуралҫӑсен ҫуртӗнче тӗлӗрсе илнӗ хыҫҫӑн хӗвелтухӑҫӗ хӗрелме те тытӑннӑ. Инҫетри вӑрман хыҫӗнчен хӗвел саркаланса тухнӑ. Ҫак вӑхӑтра Микулай пичче сад айӑккине хӑйӗн ирхи ӗҫӗпе кайнӑ та тӗлӗнмелле япала курнӑ.

Шырлан тӑрӑх пӗр кӗлетке йӑраланса пырать. Пӗрре сын пекех туйӑнать, тепре кантӑр ҫинчи мӗлке пек те туйӑнса каять...

— Мӗн пултӑр ара ку?—тӗлӗннӗ Микулай пичче. Пӑхсан-пӑхсан, вӑл тавҫӑрса илнӗ: ҫак мӗлке вӑл—калама ҫук ватӑ старик; хӑй аран-аран уткалать, хушӑран ӳсӗрет... Унӑн аллинче хӑрӑк патак. Ҫийӗ-пуҫӗ вара лӑстӑр-лӑстӑр ҫӗтӗк. Шурӑ сухалӗ кӑвапа таран (ун пек сухаллӑ ҫынсене пирӗн патра „кӗреҫе сухал" теҫҫӗ).

—Мӗнле старик ҫак вӑхӑтра ҫӳретӗр?—шутланӑ Микулай пичче.

Ватӑ старик, пӗшкӗнкелесе, хуллен-хуллен утса пынӑ. Николай Петровича вӑл курмӑш пулнӑ, ҫитменнине тата, ун пек ҫынна курасси ҫинчен шухӑшламан та... „Кунта вӗт хресченсем пурӑнаҫҫӗ, вӗсем хушшинчен тухасси вӑл—сурӑх кӗтӗвӗ витӗр тухнӑпа пӗрех..." тенӗ вӑл хӑйне хӑй.

— Эсир ӑҫта каятӑр... Ӑҫтисем?—хыттӑн кӑшкӑрса ыйтнӑ сад хуҫи старикрен.

— Ҫавӑнталла... Застава патне ӗҫпе каймалла... Унта манӑн ывӑл пурӑнать,—тенӗ ют ҫын.

— Ывӑлу тетӗн?—ыйтнӑ Микулай мучи...

— Ывӑлӑм ҫав, ывӑлӑм...

— Айтӑр, илсе каям ывӑлӑр патне, эпӗ ӑна пӗлетӗп, тӳрӗ ҫулпа кайӑпӑр...

— Каяр-ха эппин, каяр-ха...—Эхлетсе пынӑ ватӑ старик.

„Савин юлташӑн ашшӗ ӑҫтан ҫавӑн пек пултӑр? Мӗншӗн вӑл пӗччен ҫӗтсе ҫӳретӗр?" пырса кӗнӗ Микулай пиччен пуҫне хӑюллӑ та ҫивӗч шухӑш. Мӑн сухаллӑ старике вӑл хуралҫӑсен ҫурчӗ патне илсе ҫитернӗ. Хурал ҫурчӗн алӑкӗ умӗнче: „Эсӗ кунта кӑштах ларса кан-ха. Эпӗ ӑшӑрах тумтир тӑхӑнса тухам", тенӗ Микулай пичче. Старик килӗшнӗ. Сад хуҫи пӳрте кӗрсенех хуралҫӑсене вӑратнӑ.

— Ют ҫын... Заставӑна каясшӑн...—шӑппӑн каланӑ вӑл канакан икӗ хуралҫӑна хӑлхаран. Вӑртварт сиксе тӑнӑ вӗсем, часах хӑйсен пӑшалӗсене ярса илнӗ. Тухнӑ тухманах, эхлетсе ларакан старике хупӑрласа илнӗ. Вӗсемпе пӗрле Микулай пичче те хӑйӗн пӗчӗк пӑшалне илсе тухнӑ. Виҫҫӗмӗш хуралҫӑ та ҫывхарса ҫитнӗ.

— Аллуна ҫӗкле!—тенӗ Николай Петрович пӑшалӗпе хӑлтӑркка старик ҫине тӗллесе.

— Эх, ырӑ ҫынӑмсем, эсир мана ватӑ пулин те такам вырӑнне хуратӑр пулмалла,—тенӗ лешӗ ҫемҫе те йӑпалӑкка чӗлхепе,—хӑвӑрах ӗнтӗ куратӑр эпӗ питех те мӗскӗн ҫын. Турӑ ҫырлахтӑр, ун пек хӑтланма...—Эхлете-эхлете сӑх-сӑхнӑ мӗскӗн старик. Пӑхма хӑй ҫав тери йӑвашшӑн курӑннӑ, айванлансах кайнӑ. Ҫӑмӑр айне пулнӑ кӑркка пек тайкаланнӑ, нӑйкӑшнӑ...

Хуралҫӑсем старике ухтарнӑ, анчах нимӗн те тупайман: унӑн ни пӑшал таврашӗ, ни документсем, ни укҫа-тенкӗ пулман,—пӗр сӑмахпа каласан, хӑрӑк патаксӑр пуҫне унӑн нимӗн те пулман.

— Вӑт,—тенӗ вӑл эхлетсе,—нимӗн те ҫук вӗт. Ара ман пек чухӑн ҫынӑн мӗн пултӑр. Чӑн та, эпӗ хамӑн ывӑлӑма тахҫантанпах курман, вӑл ҫитӗнсе ар пулнӑ ӗнтӗ. Тен, мана паллаймӗ те. Пысӑк вырӑнта ӗҫлет. Ун патне пырсан, хӑвӑр йӑнӑшна уҫҫӑнах курӑр. Эй, атте турӑ, ӳкӗте кӗртсем ҫавӑн пек йӑнӑш тӑвакан ҫынсене...

Ҫапла тӗркӗшсе тӑнӑ вӑхӑтра хуралҫӑсенчен пӗри лаша кӳлсе килме те ӗлкӗрнӗ.

— Ларӑр, сирӗн утма вӑй ҫук пулӗ, ватӑ ҫынна шеллес пулать.

Сӑхсӑхса тӑракан старике ирӗксӗрех урапа ҫине лартнӑ та застава начальникӗ патне вӗҫтерсе кайнӑ.

Акӑ мӗнле пулса иртнӗ ӗҫ. Ун ҫинчен Микулай пичче Савин юлташа ирех каласа пачӗ. Унтанпа нумай вӑхӑт иртнӗ. Савин юлташ ҫак ӗҫ мӗнпе пӗтни ҫинчен каласа пама Николай Петрович патне ятарласах килчӗ. Акӑ вӗсем ешӗл ҫеҫкеллӗ тӗм патӗнче ашшӗпе ывӑлӗ пек каласса ларҫҫӗ.

Хӗвел кӑнтӑрларан иртсе каҫалла сулӑнсаҥ тин, вӗсен сӑмахӗ вӗҫленсе ҫитрӗ.

— Пирӗн колхозниксем,—терӗ юлашкинчен Савин юлташ,—ҫав „старик" пек начар тумланмасҫӗ. Чӑнах та, ҫак „мӗскӗн ҫынна", вӑл граница урлӑ каҫас умӗн, хуҫисем вӗрентнӗ. „Совет Союзӗнче пурте ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирсем тӑхӑнса ҫӳреҫҫӗ, лайӑх тумтир тӑхӑнса кайсан, сана тӳрех палласа тытма пултараҫҫӗ, тепӗр енчен тата, унти хресченсемпе рабочисем мӑн сухаллӑ, унта авалхи йӑлапа пурӑнаҫҫӗ: мунча кӗмеҫҫӗ, сухалсене хырмаҫҫӗ..." тенӗ ҫав ҫыннӑн пуян хуҫисем. Анчах вӑл государствӑн разведки йӑнӑшнӑ, эсир ҫав шпиона часах палласа илтӗр... **ХУДАРСЕМ.**

# Халĕ ватăлнă Чичиковпа Манилов пек

К. Сверчков ÿкерчĕкĕ.



— Кăмăл тăвăр ĕнтĕ, маншăн ун пек ан чăрманăр, эпĕ кайран кĕрĕп, — тенĕ Чичиков.
— Çук, Павел Иванович, çук, эсир хăна, — тенĕ Манилов, аллипе ăна алăк çинелле кăтартса.
— Ан чăрманăр, тархасшăн, ан чăрманăр. Тархасшăн кĕрĕр, — тенĕ Чичиков.
— Çук, ан та шутлăр, çакнашкал кăмăллă та нумай вĕреннĕ хăнана хыçалтан кĕртместĕпех.
— Мĕншĕн нумай вĕреннине?.. кĕрĕрсем тархасшăн малтан хăвăр.
— Çук, эсирех кĕрĕр ĕнтĕ.
— Ара мĕншĕн?
— Çавăншăн, — тенĕ Манилов.

АСĂРХАТТАРНИ: Çапла калаçса тăнă Чичиковпа Манилов пÿлĕме кĕмелли алăк умĕнче. Çаплах калаçса тăнă пĕрле растрата тунипе тытăннă икĕ çын суд алăкĕ умĕнче.

---

## Йăнăш

Мушар (Куславкка р-нĕ) ял çыннисем А. Никитина пуçламĕш осоавиахим организаци председательне суйласа пысăк йăнăш тунă. А. Никитин — талантлă сунарçă. Вăл осоавиахим членĕсене Ворошиловла тĕл пеме вĕрентме илсе килнĕ винтовкăна çакса кашни кунах тенĕ пек сунара тухса каять. Кайăк-кĕшĕксене тытаймасть пулин те, пемелли хатĕрсене пĕри юлмиччен сывлăша ĕрĕхтерсе пĕтерет.

„Осоавиахим ĕçĕ вăл кайăк-кĕшĕк мар, кĕркунне çитсен ăшă еннелле вĕçсе каймасть“, тет вăл.

**В. Филиппов.**

## Выговор иличчен

Йĕпреç МТС директорĕ Константинов юлташ суя сводкăсем парса государствăна улталас çул çине тăнă. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтернĕ комбайн пĕрре те пулман пулин те, вăл „3 комбайн юсаса пĕтерне“, тесе пĕлтернĕ. (Хаçатсенчен).

— Ах, йыснаçăм, йыснаçăм, мĕншĕн пăхан çÿлелле, мачча кашти сăватни?

— Мачча кашти сумастăп.

— Мĕн сăван?

— Пирĕн МТС июнĕн 1-мĕш тĕлне миçе машина юсанине сăватăп.

# О, савнӑ тусӑм

Авланас килет.

Ҫак шутпа эп мӗн кӑна туман-ши? Мӗн кӑна шутласа кӑларман-ши? Кам кӑна пулман-ши?

Ҫав шутпах пӗррехинче эп танкист пулса та куртӑм. Ох, тетӗп, танк, тетӗп, ҫавтери вӑйлӑ вӑл, тетӗп. Атӑл урлӑ та ҫаплах ишсе каҫма пулать унпа, тетӗп.

— Паром ҫине лартсассӑн-и?—терӗ ҫумра утса пыракан ҫавра питлӗ хӗр.

— Как так?—тетӗп.—Вӑл вӗт танк!..

— Пӗлетӗп,—терӗ хӗр.—Эпӗ трактористка. Танк мӗнлине те пӗлетӗп.

Унпа эп урӑх калаҫмарӑм. Тепрехинче тепӗр хӗр умӗнче летчик пулса пӑхрӑм. Эх, тетӗп, аэроплан, тетӗп, ун ҫине ларса курман пулӗ-ха эс?

— Ун ҫине ларман, ӑшне кӗрсе ларнӑ,—терӗ хӗр.—Эпӗ хам летчица. Производствӑри ӗҫрен уйрӑлмасӑр вӗренсе тухрӑм.

Урӑх калаҫмарӑм. Тепрехинче артиллерист пултӑм.

— О-о-ойй!—терӗ хӗр. Кӑвакарчӑн пек вӑл култӑртатрӗ. Чӗкеҫ пек чӗвӗлтетрӗ. Куҫӗсене култарчӗ. Ак халех вӑл манӑн ытама кӗрсе ӳкӗ тесе хавхаланса тӑратӑп.—Пыр-ха,—терӗ хӗр.—Кӗҫӗр пыр-ха ман патӑма. Килех пыр...

Хӗр парса хӑварнӑ адрес тӑрӑх каҫ пулнӑ-пулманах тухса суллантӑм. Ҫитрӗм. Хӗр мана калама ҫук хавасланса, ӑшӑ ыйхӑран та ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илчӗ. Килте хӑйсӗр пуҫне никам та кансӗрлекен ҫукки ҫинчен пӗлтерчӗ.

— Апла пулсассӑн питӗ те хавас сирӗн килте хӑна пулмашкӑн,—тесе пуҫ тайрӑм унӑн умӗнче.—Ят мӗнле сирӗн?

Ятне вӑл каларӗ. Хамӑнне те каларӑм.

— Питӗ хавас, Петӗр,—терӗ вӑл. Артиллеристсене эпӗ питӗ юрататӑп.

— Сана та,—терӗм эпӗ.—Мӗнле-ха сан пек хӗре юратмӑн. Пӗр питӳ ҫинче хӗвел, теприн ҫинче уйӑх ялкӑшать вӗт.

— Икӗпитлӗ-им эпӗ?—терӗ хӗр.—Ҫук. Двурушник мар эп. Кӑшт йӗркеллӗрех калаҫ-ха. Эсӗ, темӗнле, поэтсем пек калаҫатӑн.

— Поэтсем! Поэтсем йӗркеллӗ ҫынсем мар-и вара саншӑн?

— Пӗлместӗп,— терӗ хӗр.—Хӑйсене куҫкӗретӗнех курса калаҫман эп. Анчах сӑввисем... Темле шутпа ҫырнӑ сӑвӑсем вӗсем. Акӑ эпӗ кӑҫал темӗн чухлӗ сӑвӑ вуларӑм. Авторӗсем ҫамрӑкскерсем пулас. Халиччен палӑрсах кайман вӑл ятсем. Альбор, Кӑвик, Ястран, Орликов, Дахваран, Тимушвеев, Егоров, Палка, Халкай, Анкай тесе алӑ пусаҫҫӗ. Пурте тенӗ пек хӗрсем ҫинчен ҫыраҫҫӗ. Телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫа хӗрсене юратни урлӑ ҫеҫ кураҫҫӗ...

Эпӗ нимӗн чӗнмесӗр ун ҫине шӑтарас пек пӑхса ларатӑп. Хӗр хавхалансах калаҫать. Аллине вӑл асӑннӑ ҫамрӑксен кӑҫал пичетленсе тухнӑ сӑввисен ҫӗклемне тытнӑ. Акӑ, итле-ха,—тет хӗр. —Мӗнле ҫырать пӗри:

„Эпӗ пӑхрӑм кантӑк витӗр,
Тусӑм иртрӗ пуль тесе.
Калас терӗм: савнӑ тусӑм,
Пуплемешкӗн кӗр, тесе".

Ку ӗнтӗ, паллах, кахалскер пуль. Тусӗ патне хӑй тухасшӑн мар, кантӑк витӗр чӗнсе кӳртесшӗн.

Эпӗ чӗнместӗп. Хӗр вулать:

„Тапрӗ сикрӗ, вӗҫрӗ урхамах,
Тухчӗ, тухчӗ, сар хӗр, урама!"

Тем тума чӗнет ӗнтӗ. Хӑй урхамахпа вӗҫтеретӗп, тет. Сар хӗр урама тухса ӗлкӗриччен таҫта та „вӗҫсе" ӳкме пултарӗ.

Каллех чӗнместӗп. Хӗр вулать:

„Тӗл пулмашкӑн эс тухсамччӗ
Кӗрхи сарӑ вӑрмана.
Ӑшӑ сӑмахна парсамччӗ
Яланхи пек эс мана.

Вӑрманта свидани тӑвасшӑн. Ну-и чее каччӑ... Чӗнместӗп. Хӗр вулать:

„Ырлӑха та хурлӑха—
Тунсӑхларӑм кутӑруҫӑн
Сансӑр эпӗ, хура куҫӑм!
Кӗтрӗм—эс тухмарӑн, тусӑм,
Кӗҫӗр ешӗл улӑха".

Питӗ шел каччине. Ҫапах хӗрӗ маттур. Ӗҫсӗр аптӑраса улӑхра ҫӗр каҫиччен ҫил хӑваласа ҫӳрекен ҫын патне тухиччен тухманни пин хут авантарах.

Эпӗ чӗнместӗп. Хӗр вулать те вулать:

„Юратнӑ хӗрӗн пурҫӑн пек кӑтри
Ман ҫурӑмра ай вӗлтӗр вӗҫнӗ чух,
Хаваслӑхпа чӑп чӑмӑр ҫеҫ кӑкри
Туллин тулса пит хӑвӑрт тапнӑ чух—
Чунтан савса яш туслӑх куркине
Шалтти ӗҫме тӑсайӗ ман енне."

Сӳпӗлтӗк мари вара ҫакӑ? Сӑмсине те йӗркеллӗн шӑлмаллӑх ҫитӗнмен пуль—халех курка йӑтса, хӗр ҫумӗнче мӑнаҫланса ларасшӑн. Юратмастӑп ун пек сӑвӑсене. Юратмастӑп ун пек сӑвӑ ҫыракансене.

„О, савнӑ тусӑм! Санӑн кӗвӗре
Ҫиҫетчӗ ӗмӗт, ӑшӑ юрату.
Халь ак ялан ман ҫамрӑк чӗрере
Чечекленет сирень те сан яту".

Капла калани нимех те мар-ха вӑл, „юрататӑп" тени ҫеҫ ниме те пӗлтермест. Мӗншӗн тесен:

„Нихӑҫан та чунтан савакан
Каламасть: „юрататӑп" тесе.
Унсӑрах ӑнланаҫҫӗ ялан
Пӗр-пӗрне савакан чӗресем".

Татах та нумай вуларӗ хӗр. Нумай итлерӗм. Юлашкинчен тӳсеймерӗм. Ыйтрӑм.

— Ку сӑвӑсене вӗт сире, хӗрсене, юрас тесе ҫырнӑ. Мӗншӗн хурлатӑн эс вӗсене?

— Хурласа каламастӑп,—терӗ хӗр.— Йӑлӑхтарнӑ вӗсем мана. Пирӗн ҫинчен ҫыратпӑр теҫҫӗ пулӗ вӗсем. Ҫук. Эпир вӑл сӑвӑсенче хамӑрӑн обрӑза курмастпӑр. Ҫавӑнпа вуласа тухнӑ-тухманах манса каятпӑр. Ак калӑпӑр, ӗлӗк Нарсписем нумай пулнӑ. Вӗсенчен пӗрне илсе К. В. Иванов калама ҫук вӑйлӑ образ панӑ. Халӗ ҫук-им вара пирӗн Нарсписем? Темӗн чухлех. Анчах урӑхла—ҫӗнӗ шухӑшлӑ, паттӑр та хӑюллӑ хӗрсем вӗсем: летчиксем, трактористкӑсем, инженерсем. Мӗншӗн ҫырмалла мар вара ҫавсем ҫинчен пӗр лайӑх поэма?

— Тĕрĕс,—терĕм эпĕ.—Эпĕ хам та çавăн пек хĕр çинчен пĕр пы-ы-ысăк поэма çырасшăн-ха. Сюжетне каласа парам-и?

— Ан кала,—терĕ хĕр.—Итлеместĕп.

— Мĕншĕн?

— Мухтанчăксем çеç сюжетсем каласа çӳреççĕ. Хăйсем ним те çырмаççĕ, çыраймаççĕ те. Пĕр пиллĕк çул ĕлĕкрех Лапшу Çтаппанне тĕл пулнăччĕ эпĕ. Темĕнле тараккан хĕн курса çӳрени çинчен, хĕвел хĕн курни тата сухал хĕн курни çинчен те кĕнекесем çыратăп, тенĕччĕ. Кĕнекесемшĕн договор туса укçа та илтĕм тенĕччĕ. Сюжетне те каланăччĕ. Кĕнекесем халĕ те çук. Пулмаççĕ те вĕсем. Кирлех те мар..

Эпĕ тĕлĕнсе ларатăп. Мĕнле сăмах тупса калаçам-ши ĕнтĕ ку хĕрпе, тесе шутлатăп.

— Эсĕ артиллерист тетĕн,—терĕ хĕр.—Эсĕ мана питĕ кирлĕ çын. Артиллеристсем математикăна питĕ ăста пулаççĕ. Эп хам институтра физикăпа математика факультетĕнче вĕренетĕп. Ыран зачет памалла. Пулăш-ха мана кĕçĕр. Ырă çын пул...

... Тухса шăвăнтăм эп. Хальхи хĕрсене ултавлă сăмахсемпе çавăрма çавтери йывăр иккенне уçăмлăн ăнлантăм. Вĕренмесĕрех танкист е летчик, артиллерист „пулнă“ çынсене çеç мар, çӳлте асăннă начар сăвăсен авторĕсене те юратмаççĕ вĕсем. Тĕлĕнмелле. Тата кам „пулсă“ курам-ши?

Çапла пĕтерчĕ хăйĕн калавне манпа ăнсăртран курнăçса калаçакан Шаклапуç Шăнттарайĕ евĕрлĕ этем.

**Митта Петĕрĕ.**

## Утне тивмен—туртине

Анат-Тимĕрçен ялĕнчи (Пухтел р-нĕ, Куйбышев облаçĕ) паллă хулиган **Н. Рябов** пĕр каçхине килне пырсах ялсовет депутатне Елена Сульдеевăна хĕнесе тăкнă. Елена упăшки—конюх Сульдеев—вăл вăхăтра колхоз витинче пулнă. Пухтел районĕнчи халăх сучĕ ку ĕçе пăхса тухса, Рябов хулигана тивĕçлĕ наказани панă.

Çакăн хыççăн районри хаçат „Пĕрлешӳллĕ ĕç“ кун çинчен материал çырса кăларнă. Вăл çакăн пек абзацпа вĕçленет:

„Анчах **Сульдеев** суд хыççăн та лăпланма шухăшламан. Килне таврăннă чухне вăл Сульдеева упăшкин тумтирĕсене çурса, аллисене урнă йытă пек кышласа пĕтернĕ“.

Питĕ те хăватлă перо иккен „Пĕрлешӳллĕ ĕç“ хаçат редакторĕ М. Нюдеевăн. Вăл куçне хупса пĕрре чĕрнипех Рябов вырăнне чипер ĕçлекен конюх Сульдева хулиган туса хунă.

Утне тивмен — туртине, тенĕ пек М. Нюдеев çапни те Сульдеева мар, Нюдеева хăйне тивĕ тетпĕр эпир. **И. Ефремов.**

## Мĕн мĕне пĕлтермест

* Вăрнарти, Вăрмарти, Елчĕкри, Çĕрпӳри культура çурчĕсенче пĕр кĕнеке те çукки вăл çуртсен вывескисене улăштармаллине пĕлтермест.

* Темиçе çул ĕлĕкрех Ишлей районĕнчи Муркаш шывĕ çинче шыв арманĕсем пĕтĕмпе 8 пулнă пулсан, халĕ пĕвисене шыв татса кайнă икĕ арман çеç юлни—Муркаш таврашĕнче пурăнакансен тырринчен авăртмасăрах çăнăх пулнине пĕлтермест.

* ЧАССР Финанс комиссариачĕ иккĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ мобилизацилес плана май уйăх варринче тин вырăнсене ярса пани—кăçалхи çул иккĕмĕш квартал пĕлтĕрхинчен каярахран килнине пĕлтермест.

## СТРОЙМАТЕРИАЛСЕМ ПИРКИ



**ĂС ПАНИ: Строительсем! Строительство валли хăйăр çак пароходпа Аçтăрхантан илсе килессе шанса ан ларăр. Кунтах шырăр.**

# ВАТ АСАТТЕ ШУПАШКАР КУРНИ ÇИНЧЕН

Ну, лартăм хайхи уçă машина çине улпут пек вырнаçса. Ман Макçăм таçта урипе пусрĕ, темĕне аллипе пăркаларĕ те, пирĕн машина ăв-ăв-ăв! туса, вырăнтан çил пек хусканса кайрĕ. Эх, пыратпăр çав çатма пек такăр çулпала кĕрлеттерсе. Хыçалтан тусан кăна мăкăрланать, телеграм юписем вĕлт те вĕлт туса кăна юлаççĕ. Кăмăлăм çавтери çĕкленнипе хамăн кĕреçе пек сухалăма шăлкаласа кăна пыратăп.

Нумай кайрăмăр-и, сахал-и,—Карачура вăрманĕнчен тухрăмăр та, хула ывăç тупанĕ çинчи пек курăнма пуçларĕ. Ман Макçăм калать:

— Хытăрах пăх, Эрхип мучи, авă епле илемлĕн курăнать Чăваш республиккин столици, тет. Пăхатăп та, хам куçпа курнине хам ĕненместĕп: ĕлĕк Шупашкара çитсе кĕрес умĕн яланах нимĕнрен малтан темĕн чухлĕ шĕвĕр тăрăллă чиркӳсем курăнса каятчĕç. А халĕ пĕр чиркӳ те çук, шăкăри виç-тăват хутлă чул çуртсем йăлтăртатса лараççĕ. „Эк-кей, тесе шутлатăп хам ăшăмра, епле улшăнса кайнă хула юлашки вăхăтра, паллаймăн та“, тетĕп.

Сисмен те, эпир ĕлĕк хĕрарăм монастырĕ пулнă çĕрелле вашлаттарса та çитнĕ иккен. Ман Макçăм машинине хăвалать кăна. Тахçанхи-авалхи инкеке астурăм та Макçăма калатăп:

— Макçăм, тетĕп, хытăрах тыт тилхепӳне ытлашши шухăланса ан пыр, тетĕп. Кунта ĕлĕк чăпта леçме килсен эпĕ урапан хыçалти тĕнĕлĕсене икĕшне те шартах хуçнăччĕ, тетĕп.

Макçăм ман çине кулса кăна пăхса илчĕ те:

— Ан хăра. Пирĕн тĕнĕлсем хуçăлас çук!—тесе ответлерĕ. Унтан: „Эй, Ванька-лимузин, яра пар!“ тесе шăхăрчĕ те çип çапнă пек пырса кĕчĕ кĕпер çине. „Пĕтрĕ иккен лимузинăн тĕнĕлĕ“, тесе, ахтумупилĕн икĕ чӳречинчен çатăртах ярса тытрăм. Сехрем хăпсах тухса кайрĕ. Эх, хам та айван çав. „Шиклĕ çынăн шикĕ виçĕ ĕмĕре пынă“, тесе ахаль каламан иккен. Пăхсан—çулĕ тап-такăрах, нимĕн тĕнĕл хуçăласран та хăрамалли çук мĕн...

Сăмах майĕн каласан, ĕлĕк вăт тамаша курнăччĕ ку вырăнта. Вунпилĕк çул иртрĕ пулас пулать унтан вара. Чăптапа лава килме тухнăччĕ. Каç пулса çитрĕ. Шăп хулана кĕмелли кĕпер умĕнче темĕн ăррлатни-мăррлатни илтĕнет. Пирĕн лашасем хăлхисене чанк тăратрĕç. Нумаях пулмасть çумăр иртнипе çулĕ йӳçĕтнĕ чуста пек çăрăлса, этем пырса кĕрейми шăтăк-путăкланса кайнă. Пăхатпăр та умра темĕнле эрĕс-мĕрĕс кӳме кӳлеписем мĕшĕлтетеççĕ. Малта пĕр кӳме, хыçалта пĕр кӳме,—иккĕшĕ те халиччен курманскерсем. Ăр-р-р! тăвать малти. Хăр-р-р! тăвать хыçалти. Чăхăмçă лаша кашни çапмассерен хыçалтан пăс кăларнă пек, пăрт-пăрт тутарса тĕтĕм сирпĕтет, анчах никак вырăнтан хусканаймасть. Урап);исем кăна хăйсем тĕллĕнех çавăрăнса пылчăк пĕрхĕтсе тăраççĕ. „Ак тамаша, мĕн япала пулчĕ-ха ку халиччен курманскер?“ тетĕп. „Ахтум урапи ланкашкана лакса ларнă, теççĕ, халĕ ăна трахтăрпа турттарса кăларас пулать“, теççĕ. Эпĕ сухал айĕн лăх-лăх кулса илтĕм те кусенчен хăвăртрах иртсе кайма тытăнтăм. Анчах шăп хыçалти кӳме тĕлне çитсен ахтум урапине тем амакĕ пулчĕ те, виç-тăват хутчен шап! шап! шап! тутарса пăшал персе ячĕ. Хăйĕн куçĕсем вĕри çĕлен куçĕсем пек чарăлса йăлтăртатса кайрĕç. Сехрем хăпнипе кукша пуçăм çинчи çĕлĕкĕм çӳлелле çĕкленчĕ. А ман сăхăм хăранипе тап та сик аяккалла. Ахаль чухне пулсан, тем тусан та ун пек чуптараймăн эсреле, а халĕ куç хупса иличчен канав урлă вашлаттарчĕ. Хам эпĕ астуса та юлаймарăм епле сирпĕнсе юлнине„ йӳççи-пăшшипе хăвăртрах ура çине сиксе тăтăм та, „турă, усалтан хăтарах“, тесе сăхсăхса илтĕм. Ман инкекĕме тенĕ пекех, хыçалти ахтум урапи ăр-р р-р! тутарса туллашса, мана веç пылчăкпа сирпĕтсе вараласа пĕтерчĕ.Чĕркуççи таран пылчăка пăхмасăрах, мулкач пек вăйхăнтăм хам лаша хыççăн. Пăхатăп—кĕсрем ман канав урлă та каçайман мĕскĕн, хыçалти тĕнĕлсем иккĕшĕ те шартлатнă...

Çапла тамаша курма тиветчĕ çав ĕлĕк чух Шупашкара кашни килмессеренех. Хулана хуть хăш кĕтессинчен пырса ан кĕр, пурĕ пĕр ниçта ашса тухайми пылчăкчĕ. А халĕ çав пулни-иртнисем çинчен астума ĕлкĕричченех мана Шуххăр Макçимĕ шăп хула варрине илсе çитерчĕ. Шуххăрĕ те шуххăр та, çулĕсем çатма пек, шăлт йывăç шашкăсем сарса тунă вĕт, амутке!

Тамаша тенĕрен, ку хутра та тамашасăрах иртмерĕ Шупашкарта ман тĕллĕн. Çитрĕмĕр те хайхи хулана, манăн ĕлĕкхи йăлапала пасара çитсе курас килчĕ. Пасар ăçтине ĕлĕк-авал лайăххах пĕлеттĕм. Авал унта çăвĕ-çăвĕпех ашса тухайми лачака пăчăртатса тăратчĕ, тата ӳпле пек кăна пĕчĕк лавкасем карталанса ларатчĕç. Çитеп те çак вырăна, ни лачаки, ни ӳпле пек лавкисем çук. Ун вырăнне темĕн тĕрлĕ хитре чечексемпе йăлкăшса ларакан ем-ешĕл пахча ешĕрет. Унта темĕн чухлĕ халăх кĕшĕлтетет.

— Эк-кей, ăçта кайса кĕнĕ пасар?—тетĕп.

— Кунта ни пасар, ни масар çук. Кунта кану паркĕ,—теççĕ мана хирĕç.

— Камран ыйтас?

— Ав милиционертан ыйт,— теççĕ.

Хулан икĕ урамĕ хĕресленсе каçнă вырăнта шап-шур тумтирлĕ милиционер аллисемпе хăлаçланса, иртсе çӳрекен машинăсене çул кăтартса тăрать.

— Юлташ милиционер, ăçта кунта пасар?—тесе ыйтатăп çакăнтан. Ку ман умра йăрст тăсăлса тăрса честь пачĕ те калать:

— Мĕнле пасар кирлĕ сана? —тет.

— Как мĕнле пасар, ĕлĕкхи пасар,—тетĕп.

— Нимĕнле ĕлĕкхи пасар та çук кунта. Пур зеленый базар. Ав çав пысăк çурт патĕнчен иртсен сылтăмалла пăрăнмалла,—тет. Эпĕ кăштах вырăсла ăнкаратăп та тӳрех сисрĕм: юриех кулать иккен манран милиционер юлташ. Епле симĕс пултăр вăл пасар тени?

Çитрĕм те куратăп: çĕнĕрен кăна туса лартнă вăрăм ĕретлĕ таса лавкасенче колхозниксем тем-тепĕр сутаççĕ. Купăсти-хăярĕ, улми-суханĕ, кишĕрĕ-çарăкĕ, сĕчĕ-турăхĕ,—темĕн те пур. Кулман мĕн манран милиционер юлташ, пахча-çимĕçĕсем нумайран зеленый базар тесе ят панă иккен ăна.

Ĕлĕк хула пасарĕн хуçисем шампа хырăмлă купцасемпе шыçмак кĕлеткеллĕ усламçăсемччĕ. А халь ĕççыннисем хăйсем хуçа хула пасарĕнче.

Пасарта киллениччен курса çӳренĕ хыççăн астусах кайрăм. Манăн кунта çывăх паллакан хăта пур вĕт-ха. Вун-вуник çул ĕлĕкрех Совпартшкулта сторожра ĕçлетчĕ вăл, халĕ те çавăнтах мар-и?

Тытăнтăм шырамашкăн ĕлĕкхи Совпартшкул çуртне. Шыратăп-шыратăп, шыратăп-шыратăп, ниепле те шыраса тупаймастăп. Темиçе хутчен çаврăна-çаврăна тухрăм пĕр вырăнах. Çуртне те тупрăм. Çурчĕ нумай çĕнĕрех пек курăнать те ку çавах ĕнтĕ, анчах вырăнĕ вăл мар. Ĕлĕк кунта пĕр чиркӳ пурччĕ те тата хăлтăр-халтăр çуртсем çĕр ăшнелле путса ларатчĕç. А халĕ пăх та кур. Ни чиркĕвĕ çук, ни вак-тĕвек çурчĕсем курăнмаççĕ. Вĕсен вырăнче темĕн пысăкĕш кермен-сем пĕлĕтелле кармашаççĕ. Гостиница теççĕ-и, ресторан теççĕ-и те, анчах çӳлелле пăхсан çĕлĕк ӳкмелле. Эх, урамĕсене курасчĕ тата эсир! Çатма пек кăна çутăлса выртать. Ик енĕпе лăстăрка çамрăк йывăççем хумханса ӳсеççĕ. Халăхĕ вĕçĕхĕррисĕр вĕркесе çӳрет. Иртсе пĕтме те çук. Пурте васкаççĕ. Таçта кăна васкаççĕ çав териех?

Ну ĕнтĕ хамăн авалхи тусăма тупса пулмарĕ, халь хулана пăхса çавăрăнам-ха, тетĕп. Ĕлĕк-авал хулан пĕр вĕçĕнчен шăхăрсан, тепĕр вĕçне илтĕнетчĕ. А халĕ утрăм-утрăм, утрăм-утрăм,—ниепле те утса тухаймастăп. Ăçта çитнĕ унта ик-виçĕ хутлă чул çуртсем, шкулсем, çĕнĕ магазинсем. Темиçе сехет хушши çавăрăнса çӳрерĕм пулĕ, çапах хулан вĕçне-хĕррине тупаймарăм. Шăлт ывăнса çитрĕм. Юлашкинчен пуçăм анраса кайрĕ те, килнĕ йĕрпе киле-киле, хамăр малтан чарăннă вырăна пырса тухрăм. „Инкек çине синкек“, теççĕ—чăнахах мĕн. Ман Шуххăр Макçăмĕ эп таврăнасса шанчăкне çухатнă пулнă та вĕçтере панă мансăрăнах, мур илесшĕ, килелле. Мĕн тăвас? Çуран тăрса юлтăм вĕт, амутке! Çуран танккама—утмăл çухрăм ытла, ват кĕлеткепе икĕ талăкра та çитес çук. Эх, апăрша! Улталарĕ мана, ватта, шуххăр...—тесе хаштах сывласа ятăм. Кăмăлăм хуçăлнипе икĕ куçăмран шăпăртатсах куççульсем юхса анчĕç.

— Ма макратăн, мучи?—тесе ыйтать манран паçăрхи милиционер.

— Как макрас мар та. Мана Шуххăр Макçăмĕ пĕччен пăрахса хăварнă,—тетĕп.

— Мĕнле Шуххăр?—тет ку.

Эпĕ тĕпĕ-йĕрĕпех каласа патăм. Киле çитме ниçта та лав тупас çуккипе хурланса тепĕр хут куçăмсене шывлантартăм...

— Нимĕн те ан пăшăрхан, старик. Шуххăр Макçăмĕ пăрахса кайнă пулсан, эсĕ чукун çулĕпе кайса унтан маларах вĕçтерсе çитĕн арăму патне,—лăплантарчĕ мана милиционер. Чăнах та эпĕ çав кунах поезд çине лартăм та каçалапа çывăхри станцăна çитсе ӳкрĕм, хĕвел аннă тĕлелле хамăр яла та лĕмсĕртетсе çитрĕм. Шуххăр Макçăмĕ тепĕр кунне тин таврăнчĕ. Вăл мана пăрахса хăварма шутламан та мĕн, пĕр самантлăх машинине çума кайнă пулнă та, эпĕ, анра, хам унтан çухалса кайнă. Макçăм кайран кун каçипе хула тăрăх мана шыраса хăшкăлнă, шеремет.

Вăт, çапла мыскара курса çӳрерĕм эпĕ Шупашкарта. Ман сăмаха суя тетĕр пулсан, хăвăр кайса курăр эпĕ курнă мыскарасене.

70 çулхи Эрхип мучи каласа панă,
**ИЛЛЕ ТУКТАШ** çырса илнĕ.

В. МАЯКОВСКИЙ

# Литейщик Козырев Иван хӑйне ҫӗнӗ хватере вырнаҫтарни ҫинчен каласа пани



Эп
пролетарий!
Ваклу кирлех те мар.
Чимӗр
Ҫара пакка пек
пурӑнтӑм
тӗнчере,
Кӗтмен ҫӗртенех
Рабочисен килҫурт
кооперативӗ
мана
вырнаҫтарать хваттере.
Анлӑшӗ—
ак!
Ҫӳллӗшӗ—
ак!
Усӑлтарнӑ,
ҫутатнӑ,
ӑшӑтнӑ та...
Пуринчен ытларах
чуна ҫӗклерӗ ҫак:
вӑл—
шӗкӗр уйӑх ҫуттинчен те
ҫутӑ,
ну ӗнтӗ
ним те кирлӗ мар:
вӑл—
канлӗ,
пилленӗ кунҫултан та
анлӑ,
мӗн-ха унта ҫӑвар кар,
вӑл—
ваннӑ.
Шыв кранра—
пӑртак усалрах,
тепӗр кранне,
вӗрине,—
ан тӗрт пӳрнӳне.
Сиввипе
пит-куҫна
ҫума пултаран,
вӗриййӗпе—
тар чупан йӗрсене.
„Сивви“
тет пӗр кран,
„Вӗри“—
кӑтартнӑ тепӗрне.
Ывӑнса таврӑнан,
ҫакӑнас килетӗ.
Яшка та чӗрене
пымасть,
чей те кантармасть
ӑш ҫуннинчен.
Чарлан пек чӳхенкеле-ха,
вилнӗ ҫын та ахӑл-ӗхӗлтетӗ
ҫав
чӳхенӳ кӑтӑкланинчен.
Социализма
хӑнана килнӗ пек туйӑнать.
Кӑмӑл тулнипе
сывлӑш пӳлӗнет вӗт шӑлт.
Йӗмне—
ҫекӗлтен,
блузӑна—
пӑтаран,
супӑнне—
аллуна, вара...
шӑмпӑлт!
Ларан.
Ҫӑвӑнан,
ҫӑвӑнан,
ҫӑвӑнатӑн...
Кӗскен—
шампӑртатан йӑлӑхиччен.
Ха,
пӳлӗмрех ҫу кунӗпе
Атӑл!
Пароходсем,
пулӑсем
ҫеҫ ҫук иккен.
Ху ҫинче
вунӑ ҫуллӑ пылчӑк пулсан та,
Ҫӑка хуппи пек сӗвӗнет.
Йӑвашшӑн
ваннӑ кранне
пӑран та—
куҫран ҫухалать
пылчӑк шыв,
мур шӑласшӗ!
Парланан тӑк
парланан уш...
Ҫавӑнтах—
ҫавӑр ҫӳлти тыткине,
вара
вӗт ала витӗр пек
йӑш-йӑш...
ҫӑмӑр-душ
тытӑнать пӗрӗхме.
Мӗн чухлӗ ачашлӑх
ҫав душра!
Нимӗнле сӗрӗм-мур та
сана тивес ҫук.
Ҫӳҫне якатать,
хӑлхуна кӑтӑклать.,.
Йӑлтах сар ҫу—
юхать валакри пек
ик хул хушшипе.
Типӗтен пӳ-сине
лапсӑркка кушак пек
ҫӑмламас алшӑллипе.
Пусан урайне
урай мамӑк пек.
Таса кӗпе тӑхӑнса
алӑк пек тӗкӗре пӑхан,
пӑхан та
шухӑшсем капланаҫҫӗ:
Питрех те
тӗрӗс,
питрех те
аван
ҫакӑ
пирӗн
Совет
Влаҫӗ.

**Стихван Шавлы** куҫарнӑ.

## Культурӑсӑр столовӑйра

— Пирӗн Европӑра апат-ҫимӗҫ ҫинӗ чухне вилкӑпа усӑ курма 14-мӗш ӗмӗрте ҫеҫ пуҫланӑ иккен. 19-мӗш ӗмӗр пуҫламӗшӗнче вара вилка пур ҫӗрте те курӑна пуҫланӑ.

— Пирӗн столовӑйра халӗ те курӑнмасть.

## Кун пеккисем пур-ха

**Тухтӑр:** Чирлӗ эсӗ. Чӗлхӳ шуралнӑ.

**Пациент:** Ним тунмасӑр каласан, паян эп ирхине арӑмпа ятлаҫмарӑм. Ҫавӑнпа чӗлхе шуралса ларнӑ пулӗ.

## Ылттăн пулă

Анлă Атăл хĕрриче карчăкпа старик пурăннă. Старикĕн нумай центнер пулă тытма задани пулнă, анчах ĕçĕ майлă пырайман.

Пĕрре старик тетелпе ылттăн пулă тытнă. Старик плана 20 процент тултарни çинчен Шупашкара телефон тăрăх пĕлтерме тăнă хушăрах ылттăн пулă этемле каласа янă:

— Ырă старик! Яр мана Атăла. Эпĕ сана мĕн ыйтнине веçех пама пулатăп.

— Юрĕ,—тенĕ старик.—Суймастăн пулсан, итле. Манăн нумай центнер пулă тытмалла. Анчах тытма йывăр, мĕншĕн тесен пулăсем шыв варринче ишсе çÿреççĕ, шыв хĕррине тухса выртмаççĕ. Вĕсене шыв хĕрринелле хăваласа килесчĕ.

— Юрĕ,—тенĕ пулă,—кайса çывăр. Ыран курăн.

Старик ирхине вăрансанах шывалла пăхать. Хăй куçĕ курнине хăй ĕненмест. Шыв хĕрринчен инçетре те мар, пулăсем пит нумай.

Старик хĕпĕртенĕ. Шупашкара телеграмма янă. Кĕçех çĕнĕ шухăш пырса çапăннă ăна.

— Мĕнпе тытас ку нумай пулла? Тетелсем сахал.

Пулăсене шывран тухма йăхăрнă. Анчах лешсем итлесшĕн пулман, кула-кулах шывалла чăмнă.

Старик йĕрсе янă.

Каллех ылттăн пулă ишсе тухнă.

— Ма нăйкăшан, старик? Сана мĕн кирлине пĕлетĕп. Тетелсем сахал иккен. Объективлă сăлтавсем чăрмантарнă. Кайса çывăр, тетелсем пулĕç.

Старик ир тăрсан шывра пулăсем нумайине курнă, анчах халĕ вĕсем ирĕкре мар, тетеле лекнĕ.

— Кусене мĕнле туртса кăларас? Эй, ылттăн пулăм, пулăшах!—йăхăрнă старик.

Анчах ылттăн пулă шывран тухман, телеграмма ярса панă çеç. „Намăс сана запятая пулă тытас ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса ларма точка“ тенĕ.

Юмахăм пĕтрĕ, старик пек ĕçлекен пулăçăсем пĕтмен-ха, Атăлăн хăшпĕр кукрисенче пулă тытакан бригадăсенче вĕсем пур-ха.

**Пулăç Мар.**

## Кая юлнă

Ишлей районĕнчи „Аврора“ колхоз правленийĕ хуçасăр кил вырăнĕсен çĕрĕсем çине нимĕн те актарман.

**Председатель:** Çуркуннеренпе çак хуçасăр кил вырăнĕсен çĕрĕсем çине паранкă лартам-ши, хăяр акам ши, тесе виç уйăх шухăшласа çÿрерĕм.

— Вара? Шухăшласа тупрăн-и?

— Тупаттăм та.

— Мĕн чарчĕ вара?

— Паян районран: „акма кая юлтăн“, тесе пĕлтерчĕç.

## Пулни-иртнисем

**Шайка тупнă.** Ярославский урамра пурăнакан Марья Васильева килçуртра тыткаламалли йывăç шайккана хулари нихăш магазинра та тупайман, пасарта тупнă. Чăвашпромсоюз çынни шухăшĕпе, çав сайра-хутра тĕл пулакан шайккана пĕр-пĕр промартель мар, пĕр-пĕр частник туса сутнă.

**Халиччен пулман япала.** Елчĕк районĕнчи „Смычка“ колхоз членĕсен иртнĕ пухăвĕ шăп малтан каланă вăхăтра пуçланнă. Кутăруçăн кун пек пулнине нумайĕшĕ астумаççĕ.

**Полюсран мар.** Шăрăх вăхăт çитрĕ пулин те, Ишлейпе Кувакино райисполкомĕсен ялхуçалăх енĕпе кивçен панă укçасене пухас ĕçĕсем шыв шăннă пăнчă /„точка замерзания“/ патне çитиччен анса ларнă. Ку вара полюс инçе маррине пĕлтермест.

## Вулакансен жалобисем

### КАКПĂН ТУС!

*Ваттисем каланă „Мĕн акан, çав шăтать“ тенĕ. Ку пословица тĕрĕс маррине эпĕ çакă фактпа кăтартса пама пултаратăп: пирĕн „Броневик“ колхоз Шупашкарта Чăвашсортсемовощь ларекĕнче илнĕ „купăста“ вăррине акрĕ те, турнепс шăтса тухрĕ. Ĕненместĕр пулсан Чăвашсортсемовощь ларекĕнчен „Амагер“ сортлă купăста вăрри сутнă тесе, 1940 ç. апрелĕн 1-мĕшĕнче çырса панă 18-мĕш номĕрлĕ „акт-накладная“ хута вуласа ĕненĕр.*

*Ваттисем каланине тепĕр майлă çавăрса ăнлантарма шут тытнă Сортсемовощь ларекĕнче ĕçлекен „ученныйсене,“ колхозниксене тата колхозсене купăстасăр хăварнăшăн, мĕн пулатьши? Пĕлесчĕ.*

***Р. Моисеев.***

Ойкас, Ишлей р.

### КАПКĂН ЮЛТАШ!

*„Государство пурлăхĕ çине хăвăн пурлăху çине пăхнă пекех пăх“ тенине илтсен, Шупашкарти макарон фабрикин аслă бухлгатерĕ Г. Матвеев хăйĕн пÿртне тума 13 килограмм тимĕр пăта, 5 кубометр йывăç, 500 килограмм тăккаланчăк çăнăх укçасăрах илсе тухнă. Эпир малашне çакăнтан шикленетпĕр; çĕнĕ пÿрчĕн кăмакине тума Матвеева кирпĕч кирлĕ пулсан, макарон фабрикĕн стенисене пăсса кирпĕчĕсене илсе каясран хăратпăр.*

*Н. ПЕТРОВ.*

## Ячĕшĕн

„Ячĕ кайтăр ял çине.
Ĕçĕ пултăр хут çине“,

тесе юрланă пулмалла Катек ялсовет исполкомĕнче (Канаш р-нĕ) ĕçлекенсем 1940-мĕш çулхи сметăна çирĕплетнĕ чухне. Вĕсем пушар инвентарĕсем, урапасем, шыв пички, сӳсмен-пăявсем туянма... 20 тенкĕ укçа уйăрса хăварнă.

## Çур вилĕ

Некрасов поэт çырнă сăвăн сыпăкне вуласа патăмăр:

„Çур вилĕ кĕпере курсан,
Çӳресе курнă вырăс, ямшăк
Çырмана тытрĕ утсене,
Ансăр сукмак тăрăх пырать
Кĕпер айне . . . Ут, ан хăра —
Кунтан кайсан шанчăклăрах“.

— Пирĕн кĕпер çинчен çырнă кунта,—терĕç Етĕрне районĕнчи Урапакасси çыннисем.


**ВУНĂ МИЛЛИОН ЫТЛА ĔÇÇЫННИСЕМ**

**хăйсен пурнăçне коллективлă йĕркепе страховани тунă**

**КОЛХОЗНИКСЕМПЕ КОЛХОЗНИЦĂСЕМ,**

хăвăр пурнăça коллективлă страховани тăвассине




**ОРГАНИЗАЦИЛĔР!**

**Страховани пирки комсодсенчен, çавăн пекех тата районрипе хулари страховой инспекцисенчен ыйтса пĕлĕр,**



Секретарь и вып. редактор И. Илларионов. Ответственный редактор Р. О. МАЛЮТИН.

Сдано в производство 27/VI-40 г. Подписано к печати 7/VIII-40 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 1516. Заказ № 438.

Формат бум. 58×84[1]/8. Объем 2 п. л. Тираж 8.400 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ“, г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР

Хакĕ 30 пус.





Ишлей районĕнчи Каманин ячĕпе тăракан колхозра ĕне витине 1934 çултанпа, Çĕрпӳ районĕнчи Хурăнсур колхозĕнче хур витине 1932 çултанпа тăваççĕ, анчах çаплах туса пĕтерейместĕ-ха. (Çырусенчен).

— Çак витене тума тытăннă çул пирĕн колхоз председателĕн çӳçĕ хураччĕ, халĕ кăвакарнă.